ХЫПАР

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

20 (869) №, 2016, çу/май, 26 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/çу уйăхĕн 25-мĕшĕ тĕлне/

| | |
|---|---|
| **ПАХЧАÇИМĔÇ** | |
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 15-18 |
| Купăста | 25 |
| Сухан | 25 |
| Кишĕр | 35-40 |
| Ыхра | 200-250 |
| Хăяр | 40-80 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 60-120 |
| Пылак пăрăç | 120-250 |
| Тăварланă хăяр | 120-150 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100-120 |
| Редискă | 70 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 50-120 |
| Иçĕм çырли | 90-130 |
| Апельсин | 60-80 |
| Лимон | 120-180 |
| Банан | 70-80 |
| Мандарин | 65-120 |
| Груша | 100-150 |
| Гранат | 120-180 |
| Кĕтмел çырли | 150 |
| Шур çырли | 150 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 66-68 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 58-60 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 46-50 |
| Пыл | 350-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-350 |
| Сурăх ашĕ | 180-300 |
| Пĕвер | 140-180 |
| Чăх | 250-300 |
| Кролик | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 45-58 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 250 |
| -»- сельдь | 200 |
| Мойва | 200 |
| Минтай | 170 |
| Горбуша | 280 |
| Шăла пулă /судак/ | 300 |
| Çупах /лещ/ | 120 |
| Çуйăн /сом/ | 200 |
| Карп | 250 |
| Çăрттан | 170 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 30 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 180-200 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 220 |



# Слива хуртланасран

**Слива çимĕçĕ çулсеренех хуртланать. Ăна мĕнпе сирпĕтмелле-ши?**

Слива çимĕçне икĕ тĕслĕ кăпшанкă тапăнать. Хура вĕтĕ хурт **/черный сливовый пилильщик/** тата слива хурчĕ **/сливовая плодожорка/.** Икĕ тĕслĕхĕнче те слива çимĕçĕ çинче хура пăнчă – кăпшанкă сиенленĕ вырăн – курăнать. Слива ăшĕнчи вăрри çумĕнче кăпшанкă хурчĕ аталанать, сливăна сиенлет, хуртлă çимĕç хăвăрт тăкăнать.

Асăннă кăпшанкăсен аталану тапхăрĕ расна. Пахчара мĕнле кăпшанкă хуçаланнине тĕрĕс палăртмалла. Çакă хӳтĕлеве тĕрĕс йĕркелеме май парать.

Кăпшанкă тĕсне унăн хурчĕсенчен пĕлме пулать. Пилильщикăн хурчĕ çутă, кăштах симĕсрех сĕмлĕ е сарăрах тĕслĕ, 6-8 мм вăрăмăш, çинçерех, пуçĕ хăмăр, 6 е ытларах мăшăр ураллă, каяш хăварать, хăнкăла шăршиллĕ.

Слива хурчĕ малтан тĕксĕм шурă тĕслĕ пулать, ӳснĕçемĕн шупка, çутă кĕрен тĕслĕленет, 12-15 мм тăршшĕ.

Пилильщик сада маларах тапăнать. Ама нăрă чечек çурăличченех çеçке папкине кăшласа уçса е çеçке çурăлма пуçланă чухне çăмарта хурса хăварать. Çеçке тăкăннă чухне çăмартаран вĕтĕ хуртсем тухаççĕ, вĕсем слива ăшне кĕрсе юлаççĕ. Çак кăпшанкăпа кĕрешмелли тапхăр – нăрă çăмарта хума пуçланă вăхăт. Сливăна Кинмикс /4 мл 10 л шыва/, Алиот /10 мл/10 л/ инсектицидсемпе пĕрĕхме юрать.

Слива хурчĕн лĕпĕшĕ çеçке тăкăнса пĕтнĕ хыççăн çеç тĕвĕленнĕ çимĕç çине е çулçă айне çăмарта сапать. 7-10 кунран çăмартаран хурт тухать те сливăна шăтарса кĕрет. Чечек тăкăннă хыççăн 2-2,5 эрнерен, çак кăпшанкăран хăтăлмашкăн им-çам сапмалла. Лĕпĕшсен çăмарта сапас вăхăчĕ вăраха тăсăлать, çавăнпа йывăççене пĕр хут пĕрĕхнĕ хыççăн 16-18 кунран тепре пĕрĕхме юрать. Маларах асăннă препаратсенех усă курмалла.

Сиенлĕ кăпшанкăна пĕтерме кĕркунне тата çулла тĕм тавра тăпрана кăпкалатни, кăпшанкăна сыпăçтаракан çилĕмлĕ «пиçиххисем» те пулăшаççĕ. Тăкăннă çимĕçсене пуçтарса тĕп тумалла, çуркунне, юр ирĕлсе пĕтнĕ-пĕтменех, йывăç-тĕм вуллине тасатса шуратмалла.

Çак ансат меслетсем сливăна «юратакан» кăпшанкăсенчен хăтăлма пулăшĕç.

**Пирĕн тăрăхра çитĕнтерме юрăхлă шултра та тутлă çимĕçлĕ слива сорчĕсем халĕ çителĕклех.** Слива тутлă, çемçе тата усăллă çимĕç. Лайăх тухăç паракан сортсем – «Скороплодная», «Яичная синяя», «Синий дар», «Евразия 21». Вĕсем тĕрлĕ вăхăтра пиçсе çитеççĕ. Ир пулаканнисем – «Утро», «Сверхранняя», «Опал» т.ыт.те.

«Синеглазкăна» ытларах çитĕнтереççĕ вăтам тăрăхра. Вăл сивве чăтăмлă, 3 метр çӳллĕш ӳсет. «Алексий» сорт вара лутра – 2 метра яхăн çитĕнекен тĕм. Унăн çимĕçне пуçтарма çăмăл, çурла уйăхĕнче пиçсе çитет.

«Память Тимирязева» – сарă слива. Унăн çӳллĕшĕ 3 метра яхăн. Авăн уйăхĕ тĕлнелле пулса çитет.

Сарă слива хăвăрт çимĕç памасть. Кăвак, кĕрен тĕслисем 3-4 çултан çимĕç пама пуçлаççĕ-тĕк, саррине вара 6-7 çул кĕтме тивет.

Тепĕр чухне слива сахал çимĕç парать, е пачах та памасть тенине илтме пулать. Хунав туяннă чухне сорт хăй тĕллĕн тĕвĕленекенни /самоплодный/ е тĕвĕленменнине /самобесплодный/ ыйтма ан манăр. Хăех тĕвĕленекенни пулсассăн пĕр тĕм слива çеç лартсассăн та çимĕç пулать. Хăй тĕллĕн тĕвĕленменни валли çумра тепĕр сортлă слива кирлех. Çимĕçе тытăнма пĕр вăхăтра çеçке çураканнисем пулмалла.

Улма-çырла йывăççи лайăх тухăç парасси ăна пăхнинчен, пирĕн тăрăха юрăхлинчен, тĕрлĕ чир-чĕрпе аптраманнинчен нумай килет.

## Халăх сăнанинчен

*■ Çирĕк кăчки нумай пулсан урпа аван пулать.*

*■ Юман çу уйăхĕнче çулçăпа витĕнет – сĕлĕ ăнса пулать.*

*■ Çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче çил çурçĕр енчен пулсан çулла шăрăх пулмасть.*

*■ Сарă нăрă /майский жук/ нумай – çулла типĕ пулĕ.*

## Супăнь шывĕпе

Уй пыйтинчен /тля/, ытти хурт-кăпшанкăран хăтăлма пахчаçăсем час-часах супăнь ирĕлчĕкĕпе усă кураççĕ.

**Çакна астумалла: ӳсен-тăрана пĕрĕхмелли хутăш хатĕрлемешкĕн хуçалăх супăнĕ е тикĕтлĕ /дегтярное/ супăнь çеç юрăхлă. Ырă шăршăллă супăньсенчен пĕрĕхмелли хутăш хатĕрлеме юрамасть. Кунашкалли хурт-кăпшанкăна пушшех илĕртме пултарать.**

Супăнь ирĕлчĕкĕпе тĕрлĕ хутăш хатĕрлеме пулать.

**Кĕл тăррипе /сĕлтĕ/ супăнь хутăшĕ.** 1 стакан йывăç кĕлне, çур стакан теркăпа хырнă супăне виçĕ литр ăшă шыва ярса лайăх пăтратмалла. Тăрăлнă шывпа йывăççене пульверизаторпа пĕрĕхмелле. Çамрăк туратсене губкăпа сăтăрса е шĕвеклĕ савăта авса чиксе илме юрать.

**Тип çупа супăнь хутăшĕ.** 1 стакан тип çăва, 1 стакан хырнă супăне 1 витре таса шыва ярса хутăштармалла. Йывăççемпе тĕмсене пĕрĕхмелле. Шĕвекри тип çу ирĕлчĕке туратсем, çулçăсем çинче лайăхрах çыпçăнса тăма май парать. Вăл хĕвелпе пăсланмасть, çĕре юхса анмасть.

**Табак çулçипе супăнь хутăшĕ.** Табак шăрши чылай хурт-кăпшанкăна хăратать. Сад-пахчан киревсĕр «хăнисемпе» кĕрешме лайăх. 3 литр шыва çур стакан хырнă супăнь, çур стакан вĕтетнĕ табак ярса 1-2 кун лартмалла. Унпа ӳсен-тăрана пĕрĕхме тата йывăç-тĕм айĕнчи тăпрана шăварма юрать.

Çак хутăшсем йăлтах уй пыйтинчен хăтăлма пулăшаççĕ. Хатĕрлеме те, усă курма та ансат. Хими япалисемсĕр пулнипе вĕсем ӳсен-тăраншăн та, çыншăн та сиенлĕ мар, витĕмĕ хими им-çамĕпе пĕрĕхнинчен кая мар. Тĕрлĕрен химипе ӳсен-тăрана наркăмăшличчен халăх меслечĕсемпе усă курни лайăхрах пулĕ.



## Усăллă канашсем

● Пурçăн /шелк/ япала çинчи вараланчăк тасалмасть-и? Пĕр чĕптĕм тăвара нашатырь спирчĕпе хутăштармалла та тасалман тĕле хумалла. Тепĕртакран хуçалăх супăнĕпе çумалла. Япалара вараланчăк çухалĕ.

● Куртка, çăм свитер çухависем хăвăрт вараланаççĕ. Вĕри уксуспа йĕпетнĕ пусмапа сăтăрсассăн вараланчăк тасалĕ.

ÇЫРĂНТАРУ-2016

2016 çулăн II çуррине илсе тăмашкăн "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ.

**"Хыпар" – 736,02** тенкĕ,

**"Хыпар-эрнекун" – 338,34** тенкĕ,

**«Кил-çурт, хушма хуçалăх» – 219,36** тенкĕ.

*Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене "Советская Чувашия" хаçатăн киоскĕсене те çырăнтараççĕ.*

## Вулакансем ыйтнипе

### Çĕпре помидоршăн лайăх

**Помидора çĕпре шывĕпе шăварни усăллă тенине илтрĕм. Çакăн пирки тĕплĕнрех çырса параймăр-ши?**

**Людмила ТОЛСТОВА.**
Етĕрне районĕ.

Çĕпре шывĕпе калчана та, йăран çинчи помидора та апатлантарма юрать. Анчах çу касçипе 2-3 хутран ытла мар. Вăл микроэлементсемпе, белокпа, углеводпа пуян. Çĕпрене шывра ирĕлтерсе шăварсассăн помидорăн тымарĕсем кирлĕ япалана çăмăллăнах туртса илеççĕ, вăл хăвăрт аталанать, çимĕçсем те сĕтеклĕ пулаççĕ.

Çĕпре кăмпи сивве, типĕтнине, пресланине чăтăмлă. Анчах та "хаяр" бактерисене тўсеймест. Çавăнпа çĕпрене каяш е курăк шывĕпе хутăштарса шăварма юрамасть. Ăна ытти тутлăхлă шĕвексемпе шăварнă хыççăн 10-12 кунран çеç усă курмалла.

Йăран çинчи помидора çеç мар, калчана та куçарса лартиччен çĕпре шывĕпе шăварни лайăх. Лартнă хыççăн калча хăвăртрах вăй илсе ўсме пуçлать, çĕнĕ çĕре лайăх хăнăхать.

**Çĕпрепе шăварас йĕрке.**

Пахчаçă тĕрлĕрен çĕпре – типĕтнипе, шăнтнипе е чĕррипе – усă курма пултарать, ăна тĕрĕс хатĕрлеме пĕлмелле çеç. Чĕрĕ е типĕтнĕ çĕпрене 100 грамм илетпĕр те 10 литр лĕп шывра ирĕлтеретпĕр. Вăл "ĕçлеме" пуçлатăр тесе шыва 2-3 апат кашăкĕ сахăр песукĕ хушатпăр, икĕ сехете хăваратпăр. 10 литр хатĕр çĕпре шывне тепĕр 40 литр шыв хушатпăр та помидор тĕмĕсене шăваратпăр. Çапах та çак шĕвекпе вичене пĕлсе усă курмалла, ытлашши лексен ўсен-тăрана сиен кўме пултарать. Çамрăк помидор тĕмне çур литр шĕвек çитеклĕ. Ўссе тĕрекленнĕ тĕме 2 литр таранччен юрать.



Çĕпре ăшша юрататъ. Шыв лĕп пулмалла тата шăварнă чухне те тăпра ăшă пулни аванрах. Ун хыççăн тĕме кĕлле апатлантармалла. Кĕлре помидора ўсме кирлĕ кальците кали нумай.

### Урай хăмисене хĕстеретпĕр

**Пўрт лартнă хыççăн икĕ çултанах урай хăмисем мăкăрăлма пуçларĕç, хăмасем хушшинчи хушăксем сарăлчĕç. Мĕнле юсамалла-ши?**

**С.КУЗНЕЦОВ.**
Тăвай районĕ.

Урайне сарнă хыççăн пĕр-икĕ çулта урай хăмисем типеççĕ те вĕсен хушши сарăлать, хăмасем кукăрăлма пултараççĕ. Кун пек чухне урай хăмисене хĕстермелле тата саваласа якатмалла.

Плинтуссене тирпейлĕн, пуртăпа хирсе çĕклемелле, сўсе илмелле. Плинтус айĕнчи – стена çумĕнчи – хăмана пуртăпа хирсе çĕклемелле, унтан каялла пуртă тўртĕшпе çапса антармалла, тухнă пăтасене кăларса пымалла. Виçĕ-тăватă хăма хăйпăтнă хыççăн вĕсен айккисене хырса тасатмалла. Унтан хăмасене йĕркипе каялла вырнаçтармалла, хăмасен хушшине савăл çапса хĕстерсе пымалла, пăтапа çапса çирĕплетмелле, шĕлепкине 2 мм хăма ăшне путарса лартмалла. Ăна çапнă пăта çине тепĕр пăта хурса мăлатукпа шаккаса антармалла.

Хăмасене хĕстерсе пĕтернĕ хыççăн юлнă хушăка çĕнĕ типĕ хăма е рейка хумалла, савăлпа хĕстермелле, пăтапа çирĕплетмелле. Хăмасем хушшинчи хушăк пĕр миллиметртан ытла пулмалла мар.

Урайĕнчи тикĕс мар вырăнсене, тăрăх та, урлă та, саваласа якатмалла.

Урайне юсанă чухне тĕп урай айĕнче выртакан çўп-çапа, турпаса, пăчкă кĕрпине тĕплĕн тасатмалла. Вĕсем йывăç шĕккине ĕрчеме май параççĕ.

Хăма урайне якатса тирпейленĕ хыççăн хăмапа стена хушăкĕсене плинтуспа хупламалла.

Пўлĕмри юсав ĕçне пĕтерсен хăма урайне сăрăпа сăрлама е линолеум сарма юрать.

**Василий ИВАНОВ**
**инженер-строитель хуравланă.**

## Пахчаçă валли

### Банан хуппи

Банан çиме пурте юрататпăр: ватти те, вĕтти те. Унра этем организмне кирлĕ япала нумай. Кали, кальци, магни, фосфор, тĕрлĕ витаминсем... Вăл çемçе, тутлă, усăллă.

Анчах çинĕ хыççăн хуппине чылайăшĕ ахалех кăларса пăрахать. Кăлăхах. Банан хуппи те ăшĕнчен кая мар усăллă. Паллах – ўсентăраншăн. Ăна пахчара çитĕнекеннисем валли те, пўлĕмри курăкчечек валли те усă курма мелĕ.

Туяннă банана лайăх çумалла. Мĕншĕн тесен ăна çитĕнтернĕ чухне тĕрлĕ пестицидсемпе усă курнах ĕнтĕ, лайăх тухăç илмешкĕн те хими им-çамĕпе усă курма пултарнă. Татса пуçтарнă хыççăн ытларах упрамашкăн та «хими» пулăшĕвĕпе усă кураççĕ.

Банан хуппине тĕрлĕ мелпе усă курма пулать. Çуркунне-çулла тин çинĕ банан хуппине тураса пахчаçимĕç е тĕм айĕнчи тăпрана кăшт çеç хупламалла сапмалла та – ўсен-тăраншăн паха апатлану хатĕр те. Банан хуппи 10 кунранах хăйĕнчи «пурлăха» тăпрана хывать.

Хĕлле банан хуппине типĕтмелле /морозильника шăнтса хума та юрать/. Ăшă батарейисем çинче е духовкăра ытлашши вĕрилентермесĕр типĕтмелле. Пўлĕмри чечексене хĕлле тутлăхлă япаласемпе питех шăварма юрамасть. Хĕлле чечекленекеннисене шăпах çав вăхăтра банан хуппи шывĕпе 2 эрнере пĕр хутчен шăвармалла. Чĕрĕ 2 банан хуппине тураса е типĕтнине тĕпретсе 1 литрлă банкăна ямалла, вĕри шыв /70°/ ярса 5-6 сехет тытмалла. Паха шыв хатĕр те. Ăна ахаль шывпа çурмалла хутăштарса шăвармалла. Банан хуппине пўлĕмри температурăллă шыва ярсан 1-2 талăк лартмалла.

Килти чечексенчен банан «апатне» фиалка, папоротник, бегони, цикламен, роза уйрăмах юратаççĕ.

Типĕтсе çăнăх пек авăртнă хуппа чечек куршакĕсене тăпрана хутăштарса сапма юрать. Вăтам пĕр чечек валли пĕр чей кашăкĕ порошок çителĕклĕ.

### Тислĕк нумай хывни усăллă-и?

Хăшпĕр пахчаçă тислĕке вичене пăхмасăр хывать. Анчах та çĕрмен органика удобренине пур культура та килĕштермест.

Тĕслĕхрен, **кишĕр** лаптăкне тислĕк хурсан тымар çимĕç пахалăхĕ палăрмаллах япăхать, кишĕр темиçе йўплĕ пулать. **Пăрçа** çулçи вăйлă аталанать, хутаçĕ сахал пулать. **Сухан** тата **хĕрлĕ кăшман** ўстерекен лаптăка та çĕрнĕ тислĕк çеç хывма юрать.

**Çĕрулми** те кăçалхи тислĕке килĕштермест. Çапах та **хăярпа купăста** çитĕнтерме кирек мĕнле органика удобренийĕ те юрăхлă, анчах та 1 тăваткал метр пусне 6-8 килограмран ытла хывмалла мар.

Тислĕк виçерен ытлашши тăксан пахчаçимĕçре нитрат нумай пухăнать.

## Тĕпелте чухне

### Тăпăрчă хăпартлăвĕ



**Кирлĕ япаласем: 5 çăмарта, 500 г тăпăрч, 100 г хăйма, 1,5 стакан сахăр песукĕ, 2 апат кашăкĕ çĕрулми крахмалĕ, 1 пĕчĕк пачка ваниль сахăрĕ.**

Хăпартлăва духовкăра та, мультиваркăра та пĕçерме пулать. **Ĕç йĕрки:** çăмарта шуррине сарринчен уйăратпăр, шуррине холодильника, саррине тăпăрчпа, крахмалпа, хăймапа, ванилинпа хутăштаратпăр. Хутăша блендер чашкине хурса кăпăшлантармалла, çăмарта шуррине те, уйрăммăн, шурă кăпăк пек пуличчен кăпăшлантармалла, унтан сахăр песукĕ хушмалла та вăл ирĕлсе пĕтиччене çавăрмалла.

Кăпăшка тăпăрчăна кăпăклантарнă çăмарта шуррине асăрханса яратпăр, сехете май пăтраттатпăр. Унтан йăлтах мультиваркăна «хуранне» тултаратпăр, «Выпечка» программăна суйласа пĕр сехет пĕçеретпĕр. Пиçнĕ хыççăн мультиваркăна сўнтерсе тепĕр сехет пек лартатпăр. Тăпăрчă хăпартлăвĕ торт пекех тутлă пулать. Чейпе çиме аван.

«ТЕРМИНАЛПА» ÇУРТ ТĂВАТПĂР

8-мĕш канаш

# Пире «Терминал» пурăнма пулăшать




***Официаллă статистика кăтартăвĕсем тăрăх – республикăра пурăнакансен номиналлă укçа тупăшĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 4% яхăн чакнă. Халăхăн чăн тупăшĕ вара çак тапхăрта 12,5% чухлех анса ларнă. Кăçал хăйсен çуртне çĕклеме пуçлас шухăшпа хавхаланнă çынсен çак условисенче мĕн тумалла? Ĕмĕте пурнăçласси ырана хăвармалла-и?***

Çук, ырана хăварма кирлĕ мар, иккĕленмест регионти стена тумалли материалсемпе курттăммăн тивĕçтерекен базăсенчен пĕрин – "Терминал" суту-илў комплексĕн генеральнăй директорĕ **Владислав Никитин**. Паллах, паян нумайăшне йывăррине вăл лайăх ăнланать. Çĕршыври, çав шутра республикăри экономика кризисне пула тупăш чакнă май чылайăшĕ паян çурт çĕклеме пуçланин вырăнлăхĕ пирки иккĕленет: "Вăй çитерĕп-и?" Кашниех утияла кура ура тăсать вĕт. Апла пулин те Владислав Леонидович алă усмалла мар тесе шутлать.

Пĕрремĕшĕнчен, тет вăл, **строительствăна ырана хăварсан хамăн çуртпа çыхăннă ĕмĕт çаплипех ĕмĕт кăна пулса юлас хăрушлăх пур.** Çулсем иртеççĕ вĕт – ватлăхра чылай укса хывмалли, нумай вăй хумалли ĕç пуçарас килмĕ. Тепĕр енчен, çитес çул халăх тупăшĕ тăруках пысăкланĕ тесе кам шантараять? Япăх пулĕ тесе çынсен кăмăлне пăсар мар, анчах малашне мĕнле пуласси паллă мар-ха.

Иккĕмĕшĕнчен, палăртать "Терминал" ертўçи, çăмăл мар вăхăтра чăваш халăхне яланах çĕр тĕревленĕ, пысăк мар çĕр лаптăкĕ, хушма хуçалăх пулăшнă – вĕсем хăйсене тўрре кăлараççĕх. Акă мĕншĕн çирĕплетсех калать: паян – шăпах хушма хуçалăха вăй памалли вăхăт. Сирĕн çĕр лаптăкĕ çук-тăк – ним иккĕленмесĕр туянмалла. Хула çывăхĕнче çуртсем тăвакан пĕр компани рекламинче калашле, çĕре текех туса кăлармаççĕ. Кирек мĕнле пулсан та вăл хакне çухатмĕ. Чăвашсем авалтан çĕр çинче ĕçленĕ, ăна пăхнă тата юратнă – тымарсем патне таврăнма вăхăт!

"Терминал" ТК вара çурт тума, хуçалăха тĕреклетме пулăшмашкăн хатĕр. Эпир каланăччĕ ĕнтĕ: унпа **аллаллăн ĕçлесен строительство тăкакĕсене палăрмаллах чакарма пулать.** "Терминал" – пысăк комплекс, унта стройкăра кирлипе пĕтĕмпех тивĕçтерекен нумай компани ĕçлет. Пĕтĕмпех тўрремĕнех заводсенчен кўреççĕ, çакă таварсен хакĕсене пĕчĕк шайра палăртма май парать. **Тепĕр чух – заводринчен те йўнĕрех**. Çакă строй-материалсене курттăмăн кўнипе çыхăннă. Кирпĕч заводĕсем, сăмахран, хăйсен продукцийĕн курттăм партийĕсене йўнĕрех сутаççĕ – вăрттăнлăхĕ çакăнта. "Терминал" вара суту-илўри пĕчĕк хушма хаксемпе усă курать – çакă клиентсене илĕртет. Çийĕнчен суту-илў компанийĕнче кашни объектпа пайăррăн ĕçлес йăла çирĕпленнĕ: **туянакан стройматериалсен калăпăшне, ытти сапанта кура хаксене прайсринчен те чакарма пултараççĕ.**

Çак адреспа КĔТЕТПĔР:

*Шупашкар, Канаш çулĕ, 7/1 çурт, Алькеш, «Терминал» Суту-илў комплексĕ;*
*тел.: /8-8352/ 30-55-10, 30-55-15; www.terminaltk.ru.*

### Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле | | Кун тăршшĕ | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| 26.05 | + 26 | +16 | 26.05 | 17.00 | 20 у.к. |
| 27.05 | + 27 | +16 | 27.05 | 17.03 | 21 у.к. |
| 28.05 | + 21 | +16 | 28.05 | 17.06 | 22 у.к. |
| 29.05 | + 20 | +12 | 29.05 | 17.09 | 23 у.к. |
| 30.05 | + 23 | +14 | 30.05 | 17.11 | 24 у.к. |
| 31.05 | + 19 | +10 | 31.05 | 17.14 | 25 у.к. |
| 01.06 | + 16 | + 8 | 01.06 | 17.16 | 26 у.к. |

Кун тăршшĕ 17 сехет те 16 минут пулать, 10 сехет те 16 минут вăрăмланать. 29-мĕшĕнче – кивĕ уйăх чĕрĕкĕ.

## 30 тунтикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.20, 4.05 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 1.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ПРАКТИКА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «АРОМАТ ШИПОВНИКА» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «НА ДАЛЬНЕЙ ЗАСТАВЕ» 12+
23.55 «Честный детектив» 16+
0.55 Ночная смена. «Дуэль разведок. Россия - США» «Иные. Сильные телом» 12+
2.30 Т/с «НЕОТЛОЖКА» 12+
3.25 «Пусть всегда буду я. Лев Ошанин»
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
15.00, 16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «СТЕПНЫЕ ВОЛКИ» 16+
22.30 «Итоги дня»
22.55 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
0.50 «Место встречи» 16+
2.00 «Следствие ведут...» 16+
2.55 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ППС» 16+

### ТНТ

7.00 Т/с «ПРИГОРОД-3» «НЕ САДИСЬ К НАМ» 16+
7.30 Т/с «НИЖНИЙ ЭТАЖ-2» «ЛЮБОВЬ И БАСКЕТБОЛ» 12+
8.00 «Экстрасенсы ведут расследование» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Жемчужина Поволжья**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çулатухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 От 2 до 5**
**18.29 Юхтăр юрă**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 31 ытларикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.20, 4.20 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.20 «Модный приговор»
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 2.25, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.30 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ПРАКТИКА» 16+
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Структура момента» 16+

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «АРОМАТ ШИПОВНИКА» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «НА ДАЛЬНЕЙ ЗАСТАВЕ» 12+
23.55 Вести.doc 16+
1.40 Ночная смена. «Химия нашего тела. Сахар» «Приключения тела. Испытание голодом» 12+
3.15 Т/с «НЕОТЛОЖКА» 12+
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Наша Республика. Главная тема. Премьера**
**9.20 Сельская жизнь. Премьера (на чувашском языке)**
**9.35 Депутат на связи**
**9.40-9.55 Бессмертный полк**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
15.00, 16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «СТЕПНЫЕ ВОЛКИ» 16+
22.30 «Итоги дня»
22.55 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
0.50 «Место встречи» 16+
2.00 Главная дорога 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ППС» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.27 Имею право**
**6.31 Пĕр сăвă**
**6.34 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.21 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тӳсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00Вести-Чувашия**

## 1 юнкун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.20, 4.20 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.20 «Модный приговор»
12.15 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 2.30, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.30 «Наедине со всеми» 16+
19.00 Футбол. Товарищеский матч. Сборная России - Сборная Чехии. Прямой эфир из Австрии
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ПРАКТИКА» 16+
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Политика» 16+

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «АРОМАТ ШИПОВНИКА» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «НА ДАЛЬНЕЙ ЗАСТАВЕ» 12+
22.55 Специальный корреспондент 16+
0.40 Ночная смена. «Заставы в океане. Возвращение» «Угрозы современного мира. Атомный краш-тест» «Угрозы современного мира. Атомная альтернатива» 12+
2.50 Т/с «НЕОТЛОЖКА» 12+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
15.00, 16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «СТЕПНЫЕ ВОЛКИ» 16+
22.30 «Итоги дня»
22.55 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
0.50 «Место встречи» 16+
2.00 Квартирный вопрос 0+
3.05 Т/с «ППС» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Хамăр ял**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.25 Диалоги о школе**
**7.37 Права потребителя**
**7.43-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 Самое время. Прямой эфир**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 2 кĕçнерникун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.20, 4.15 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 «Модный приговор»
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 1.25 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.15, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ПРАКТИКА» 16+
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «На ночь глядя» 16+

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «АРОМАТ ШИПОВНИКА» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «НА ДАЛЬНЕЙ ЗАСТАВЕ» 12+
22.55 «Поединок» 12+
0.40 Ночная смена. «Офицеры» «Тайны Первой Мировой войны: Великая война. Фронт русский. Фронт французский» 12+
2.40 Т/с «НЕОТЛОЖКА» 12+
3.40 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Я люблю Чувашию**
**9.15 Военное детство. Премьера (на чувашском языке)**
**9.30-9.55 Доступная среда. С сурдопереводом**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
15.00, 16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «СТЕПНЫЕ ВОЛКИ» 16+
22.30 «Итоги дня»
22.55 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
0.50 «Место встречи» 16+
2.00 «Дачный ответ» 0+
3.05 Т/с «ППС» 16+

### ТНТ

7.00 Т/с «ПРИГОРОД-3» «НУ ОЧЕНЬ ПОШЛАЯ» 16+
7.30 Т/с «НИЖНИЙ ЭТАЖ-2» «ПРЕДЛОЖЕНИЕ. ЧАСТЬ 1-Я» 12+
8.00 «Экстрасенсы ведут расследование» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Спорт площадки**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Реплика**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**
**ххх**
**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 3 эрнекун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20, 5.00 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 4.00 «Модный приговор»
12.15 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Шансон года» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Мэрилин Монро. Последний сеанс» 16+
2.05 Х/ф «САМОЗВАНЦЫ» 16+

### 1 КАНАЛ

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «АРОМАТ ШИПОВНИКА» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 «Юморина» 12+
23.00 «Императрица и 2 маэстро» Концерт Ирины Аллегровой
1.30 Х/ф «ВАЛЬС-БОСТОН» 12+
3.35 «Сергей Герасимов. Богатырская симфония» 12+
4.30 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 ФинГрамота**
**9.10 Обзор прессы**
**9.20-9.55 Мир искусства. Фольклорный ансамбль «Уяв». Премьера (на чувашском языке)**
**11.35-11.55 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Ча!!!ваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
15.00, 16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 «ЧП. Расследование» 16+
20.15 Т/с «СТЕПНЫЕ ВОЛКИ» 16+
23.10 «Большинство»
0.20 Место встречи 16+
1.35 Битва за Север 16+
2.30 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ППС» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Пресса тишкерĕвĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхикун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Обзор прессы**
**18.29 Ăраскал**
**18.49-19.00Вести-Чувашия**

## 4 шăматкун

### 1 КАНАЛ

5.50 Х/ф «ПЛОХОЙ ХОРОШИЙ ЧЕЛОВЕК» 12+
6.00, 10.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
6.10 «Плохой хороший человек» Продолжение
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Барбара Брыльска. «Мужчины не имеют шанса» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «На 10 лет моложе» 16+
14.00 «Теория заговора» 16+
15.15 Х/ф «ШИРЛИ-МЫРЛИ» 16+
18.10 «Кто хочет стать миллионером?»
19.10 Праздничный концерт «Нас не догонят!»
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «МаксимМаксим» 16+
0.10 Х/ф «ФОРСАЖ 4» 16+
2.10 Х/ф «ГРОМ И МОЛНИЯ» 16+
4.00 «Модный приговор»
5.00 «Контрольная закупка»

### 1 КАНАЛ

5.10 Х/ф «ГОРОД ПРИНЯЛ» 12+
6.45 Диалоги о животных
7.40, 11.25, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10 Россия. Местное время 12+
9.15 «Правила движения» 12+
10.10 «Личное. Денис Майданов» 12+
11.35 Х/ф «ВСЕ СОКРОВИЩА МИРА» 12+
14.30 Х/ф «ВСЕ СОКРОВИЩА МИРА»
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «ГОРОДСКАЯ РАПСОДИЯ» 12+
0.55 Х/ф «ПОЗДНЯЯ ЛЮБОВЬ» 12+
3.00 Т/с «МАРШ ТУРЕЦКОГО-2» 12+
4.40 Комната смеха

### ЧТВ

**7.40-8.00 Вести-Чăваш ен**
**8.10-9.15 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 «Преступление в стиле модерн» 16+
5.35, 1.25 Т/с «ТИХАЯ ОХОТА» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Жилищная лотерея Плюс» 0+
8.45 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
9.20 Кулинарный поединок 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Еда живая и мертвая» Научно-популярный цикл Сергея Малоземова 12+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.05 «Высоцкая Life» 12+
14.00 «Поедем, поедим!» 0+
15.05 Своя игра 0+
16.20 Х/ф «ТУРЕЦКАЯ КУХНЯ» 16+
17.15 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
22.00 «Салтыков-Щедрин шоу» 16+
23.00 «Звонок» Пранк-шоу 16+
23.30 Х/ф «СЛЕД ТИГРА» 16+
3.15 Т/с «ППС» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Пĕр сăвă**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Юрă çаврăмĕ**
**12.32 Килте пĕçерер-ха**
**12.38-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 5 вырсарникун

### 1 КАНАЛ

5.35 Х/ф «БАРЫШНЯ-КРЕСТЬЯНКА» 12+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 «Барышня-крестьянка»
7.50 «Армейский магазин»
8.20 «Смешарики. ПИН-код»
8.35 «Здоровье» 16+
9.40 «Непутевые заметки» 12+
10.10 «Следуй за мной»
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Открытие Китая»
12.45 «Гости по воскресеньям»
13.40 Х/ф «ДЕТИ ДОН КИХОТА»
15.10 «Романовы» 12+
17.15 «ДОстояние РЕспублики: Роберт Рождественский»
19.00 Футбол. Товарищеский матч. Сборная России - Сборная Сербии. Прямой эфир из Монако
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Что? Где? Когда?» Летняя серия игр
23.45 Х/ф «УЛЬТИМАТУМ БОРНА» 16+
1.45 Х/ф «СОСЕДИ НА ТРОПЕ ВОЙНЫ» 18+
3.30 «Модный приговор»
4.30 «Контрольная закупка»

### 1 КАНАЛ

5.20 Х/ф «ОЧЕНЬ ВЕРНАЯ ЖЕНА» 12+
7.00 Мульт утро
7.30 «Сам себе режиссер»
8.20, 3.55 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
12.20 К Международному Дню защиты детей. Фестиваль детской художественной гимнастики «АЛИНА»
14.20 Х/ф «СВОДНАЯ СЕСТРА» 12+
18.00 Х/ф «МОЙ ЧУЖОЙ РЕБЕНОК» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.00 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.55 Т/с «ОХРАНЯЕМЫЕ ЛИЦА» 12+
2.55 «Семь тайн Третьяковской галереи»
4.25 Комната смеха

### ЧТВ

**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ

5.00, 0.35 Т/с «ТИХАЯ ОХОТА» 16+
7.00 «Центральное телевидение» 16+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.05 «Чудо техники» 12+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.05 «НашПотребНадзор» Не дай себя обмануть! 16+
14.10 «Поедем, поедим!» 0+
15.05 Своя игра 0+
16.20 Х/ф «ТУРЕЦКАЯ КУХНЯ» 16+
17.15 Следствие вели...16+
19.00 «Акценты недели» Информационная программа
19.50 «Поздняков» 16+
20.00 Х/ф «НА РУБЕЖЕ. ОТВЕТНЫЙ УДАР» 16+
23.35 «Я худею» 16+
2.25 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ППС» 16+

### ТНТ

7.00, 7.30, 8.00, 8.30 Т/с «ТНТ. MIX» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.00, 10.30 Т/с «САШАТАНЯ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Асамлă кино тĕнчи**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри — мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтăн çӳпçерен**

